Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско–юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Эльби Валентина Андреевна**

**Книга: Çĕршывăн пулас хуралçисем**

## Повесть: Çĕршывăн пулас хуралçисем (Повеçри сыпăк)

Чарăнса тăр та кăнтăралла тинкерсе пăх-ха. Куратăн-и? Ав, лере, вăрман çумĕче, симĕс чăрăшсем хушшинче ларать вăл çурт. Стенисем – шултра хыр пĕренинчен. Илемлĕскер. Тăрринче хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет.

Темиçе çул хушши çак çуртăн урам енчи икĕ чӳречи кун çути кураймарĕ. Алăксене те хăмапа урлă-пирлĕ çапнăччĕ. Сукмакĕ çине те симĕс курăк шăтнăччĕ.

Юратмаççĕ ялта хупăнса тăракан пӳрте: чуна тунсăх пусарать. Çĕрле иртсе çӳренĕ чухне тем шиклентерет, çурăм та сăрр! сăрлатать вара.

Çак пӳрте ял çынни Семен Пилешев, таврăнма вăхăт çитсен те çарта юлнă пограничник, канма килсен туса лартнă. Çартан таврăнсан, хăйĕн çемйипе пурăнма ĕмĕтленнĕ вăл. Икĕ ачана çитнĕ-çке, йăва кирлех.

Ик-виç çул хушши хупăнса тăнă çурт сасартăк куçне уçрĕ, тинех чун кĕчĕ тейĕн. Хĕвелĕ те çулне тупрĕ, йăлтăртатаççĕ кăна кантăкĕсем унăн шевлипе. Ял ачисем пырса кĕчĕç те, çак çурт пыл хурчĕн вĕлли евĕр пулса тăчĕ.

Çурта ушкăнпа та, пĕччен те кĕре-кĕре тухаççĕ. Стройпа колхоз уй-хирне утаççĕ, стройпа ял тăрăх пыраççĕ, вăрмана утса кĕреççĕ. Тумĕсем пĕр пек. Пуçĕсенче симĕс пилотка, хулпуççийĕсем çинче симĕс погонсем, мăйĕсенче – хĕрлĕ галстук.

Пырса пăхсан хапха умĕнчи юпа çумне çапса хунă хăмана асăрхатăн. Унта питĕ тăрăшса, тĕрлĕ сăрăсемпе капăрлатса çапла çырнă:

«ЯЛТА ӲСЕКЕН ЧИКĔ ХУРАЛÇИСЕН ЗАСТАВИ».

Мĕне пĕлтерет ку. Чăваш çыршывĕ чикĕрен аякра–çке. Акă çурт умне машина çитсе чарăнчĕ. Хапхаран ача-пăча кĕшĕлтетсе тухрĕ. Вĕсен хушшинче икĕ çитĕннĕ çын.

– Хăпарăр, – хушрĕ ачасене пысăккисенчен пĕри.

– Борис Аххов, эсир кабинăна ларăр, – сĕнет ăна типшĕмрех çӳллĕ çын.

– Михаил Михайлович, вăл вырăн сирĕн, – тет лешĕ.

– Йăнăшатăр эсир, Борис. Ачасемпе çӳресси – учитель ĕçĕ.

Пурпĕрех учителе кабинăна лартрĕç.

Борис Аххов çар тумĕпе. Пуçĕнче симĕс тăрăллă, çутă сăмсаллă карттус. Хулпуççийĕсем çинче çеç погонсем çук. Машина тавра халăх йышлă пухăнчĕ.

– Сывă пул, ялйыш! Санюк, ан тунсăхла! Вера Ксенофонтовна, нимшĕн те ан пăшăрханăр, пурте йĕркеллĕ пулĕ, – тет Борис Аххов.

– Нил, Субайылда, чечек çыххине аçун вилтăпри çине хуриччен шывпа пĕрĕхĕр, вара вăл нумайччен илемне çухатмĕ, – ачисене астутарать амăшĕ Вера Ксенофонтовна.

Тем кăшкăрашаççĕ машина çинчисем. Шав тăрать. Уйрăм сăмахсене уйăрса илме те хĕн.

Машина тапранчĕ. Ăсатакансеам тăрса юлчĕç.

Акă тата, машинăна хирĕç çулпа, пĕр ача чупать. Ун аллинче мăшăр шурă кăвакарчăн.

– Пăрăн! Таптать! – кăшкăрчĕç пĕр харăс машина çинчисем.

– Ара, ку Йăкăнат-иç! – палларĕç хайхискере.

Ирĕксĕрех шоферăн машинине чарма лекрĕ.

– Илĕр, – тăсать Йăкăнат хăйăн аллинчи пилеш куçлă шурă çунатлă кайăксене. – Манран парне пултăр.

– Йăкăнат, сана ăнланатăп. Килес çулччен тăхта. Ĕрчет вĕсене ытларах, вĕрент. Халлĕхе хăвăн та çаксем çеç, – лăплантарать ачана Борис Аххов.

Ерипен хускалчĕ машина!

Шӳреке Йӑкӑначӗ пӗр кӳренчӗ, пӗр савӑнчӗ. Унччен те пулмарӗ кайӑксене аллинчен вӗҫертрӗ те ши-и! шӑхӑрчӗ. Ҫӳлтен ҫӳле ҫӗкленсе, кӑвак тӳпере вӗсем мӑшӑр шурӑ лӗпӗше, вӗр вӗлтӗртетрӗҫ. Машина ҫинчисем те курчӗҫ кӑвакарчӑнсене.

Урам кӗтесӗнче хӗрлӗ ҫӳслӗ, чӑпар питлӗ ача тӑрать. Ахӑлтатать, варне тытсах кулать хӑй.

– Трапхин, кам пит кӑтӑклатъ сана? – ыйтрӗ Йӑкӑнат.

– Санран кулатӑп. Тем чул тӑрӑшсан та юраймарӑн вӗсене. Йӑкӑнат, унпа тавлашса ҫӑвар тутине яма шутламарӗ, иртсе кайрӗ мӑнаҫлӑн, пуҫне каҫӑртса. Шутсӑр тӗлӗнсе пӑхса юлчӗ Трапхин. Унччен те пулмарӗ, ун каллех, пӗркун ачасем чӗкӗнтӗре ҫумкурӑкӗнчен тасатма чӗннӗ чухнехи пек, чун чӗпӗтсе ыратрӗ. Вӑл хӑйне ҫынсӑр утрав ҫинчи пек туять. Шартах сикрӗ ача. Темле вӑй ӑна Йӑкӑнат хыҫҫӑн чупма тӗкет. Ыткӑнчӗ вара. Хуса ҫитсен, сӑмах та тупӑнчӗ мӗн каламалли:

– Мӗншӗн-ха вӗсем сана хӑйсемпе илсе каймарӗҫ, э?

– Мана ҫитес ҫул илсе каяҫҫӗ чикӗ хӗррине, пограничниксем патне.

– Илсе кайӗҫ-ши мана?

– Сан пирки калама пултараймастӑп. Тепӗр тесен, йӑлтах хӑвӑнтан килет.

Ӑҫта кайрӗҫ машина ҫине тиеннисем? Юлашкинчен тӗл пулнӑ икӗ ачи мӗнлескерсем? Тупсӑмне пӗлме иртнӗ кунсен алӑкне уҫса кӗрер-ха.

Аслӑрах классенче вӗренекенсен ӗҫ урокӗ пырать. Вӗсем шкул пахчинче ҫӗрулми кӑлараҫҫӗ.

Шкулта кӑҫал интернат уҫӑлать. Хӗлле унта урӑх ялтан вӗренме ҫӳрекен ачасем пурӑнӗҫ. Вӗсем валли ятарласа вӗри апат пӗҫермелле. Ҫавна май ҫӗрулми, купӑста, хӑяр, кишӗр, сухан ӳстернӗ.

Пахчари ӗҫ шавӗ таҫта ҫити янраса тӑратъ. Ӗҫлеҫҫӗ, анчах пурте мар. Хуратутлӑ, мӑнтӑркка Трапхинпе вӑрӑм мӑйлӑ Шӳреке Йӑкӑначӗ пилӗкӗсене пачах авмаҫҫӗ. Вӗсемшӗн ытларах алхасса пултӑр. Йӑпшӑнса пырса, ҫӗрулми пухакан пӗр–пӗр ачана сасартӑк малалла тӗртсе чикелентерсе яраҫҫӗ те – ҫитрӗ вара ахӑлтатма. Е шӳтлӗ сӑмахсемпе култараҫҫӗ ачасене.

Трапхинпе Йӑкӑнат хӗрачасем патне пырса тӑчӗҫ. Пурте ӗҫ пӑрахсах сӑнама тытӑнчӗҫ хайхискерсене. Ахальтен ҫулӑхмаҫҫӗ вӗсем. Мӗнле те пулинех мыскара пулатех. Чӑнах та, нумай та кӗтме тивмерӗ, тытӑнчӗ Трапхин камитленме: тутине чалӑштарса пӑркалать, куҫне е чарса пӑрахатъ, е чеен хӗскелет. Пурне те илтӗнмелле кӑшкӑрса калать:

– Кӳлнари, чарӑн–ха хусӑклама!

– Мӗншӗн?

– Сан сӑнӳкерчӗк пур–и? Пар–ха мана йӑпӑртлӑха.

– Мӗн тума?

– Ҫынсене хӑратма!

– Ха–ха–ха! – кулса ячӗ Йӑкӑнат. Хӑй ҫавӑнтах шӗвӗр пӳрнисене пуҫ ҫийӗн кӑнтарса кӑтартрӗ. Ку ӗнтӗ Кӳлнари ытла та хӑрушӑ, вӑл мӑйракаллӑ тенине пӗлтерчӗ.

Кӳлнари, ним тума пӗлмӗн енне, тутине юн тухасла ҫыртса лартрӗ. Ачасем шӑплансан, хӑю ҫитерсе, ҫапла тавӑрчӗ ӗнерсӗр Трапхине:

– Эй, сӗмсӗркке, итле-ха, эсӗ тӑр-ухмах, анчах сывалма тухтӑра ҫӳреместӗн.

Ушкӑнта тахӑшӗ пӗрӗхтерсе кулса ячӗ Кӳлнари сӑмахӗнчен, анчах ҫавӑнпах ҫӑварне хупрӗ, Трапхинтен хӑрарӗ пулас.

Йӑкӑнатпа Трапхин – ачасен пуҫлӑхӗсем. Кун пирки такам та пӗлет. Шкулта вӗренме пуҫличченех тантӑшӗсене пӑхӑнтарнӑ ҫакӑ икӗ ача. Халӗ те тӑсӑлать-ха ҫав йӗрке. Виҫӗмҫул та, пӗлтӗр те вӗсен танатинчен хӑтӑлма пикеннӗ паттӑрсем тупӑннӑ, анчах ӗҫ ӑнаҫлӑ вӗҫленеймен.

Иртнӗ ҫуркунне кӑна акӑ мӗн пулса иртнӗччӗ.

Ял урамӗсем, ҫырма–ҫатрасем юртан тасалсан, кил хушшисем типсен, ачасене тимӗр–тӑмӑр пухма хушрӗҫ. Хыткан Хветӗрпе йӑмӑкӗ хӑйсен урамӗнчи кашни килех кӗрсе тухрӗҫ, мӗн тупнине ҫырма хӗрринчи мӑн йӑмра айне тултрӗҫ. Пысӑк купа ҫӗкленчӗ. Трапхинпе Йӑкӑнат пӗр катӑк ҫатма тупинччӗҫ. Шырамарӗҫ те. Тӑкӑрлӑкра ҫаплах футбол мечӗкне тапрӗҫ. Анчах вӗсен куҫӗ Хветӗрпе йӑмӑкӗ мӗн ҫӗкленине, тимӗр–тӑмӑр купи епле ӳссе пынине асӑрхамасӑр тӑман. Каҫалапа купа патне чупса пычӗҫ. Шӑп ҫак вӑхӑтра Хветӗр те шӑтнӑ питлӗх йӑтса ҫитрӗ.

– Чим! – чарчӗ ӑна Трапхин. – Эсӗ тимӗр–тӑмӑр пирӗнпе пӗрле пухнӑ тесшӗн мар-и таҫта?! Кай кунтан!

Хветӗр шалт тӗлӗнчӗ.

– Мӗн эсӗ? Ку эпир йӑмӑкпа пухнӑ тимӗр-тӑмӑр купи! – ӗнентересшӗн вӑл.

– Ха, мӗн калать, шӗпӗн! – аллине чӑмӑртаса, кӑкӑрне каҫӑртса пычӗ Йӑкӑнат.

– Намӑссӑрсем! – ҫиллессӗн каларӗ Хветӗр. – Тасалӑр кунтан, услапсем!

– Ах, шӗпӗн, эсӗ пире хӑратма-и! – туртса антарчӗҫ Хветӗре иккӗн. Кӳпкерӗҫ ӑна.

Тепӗр кунне Хветӗр класс руководительне кун ҫичен ним шикленмесӗр каласа пачӗ. Учитель чӗнтерсен, иккӗшӗ те Хветӗре хӗненине пач тунчӗҫ. Ҫапла хӑратса тӑраҫҫӗ ачасене икӗ куштан.

Дружина совечӗн председателӗ Илюк та ҫӗнтерейместь ҫав куштансене. Суйлав хыҫҫӑн ним те тӑваймарӗ-ха Илюк, вӑхӑт усӑсӑр шӑвать. Ыр ӗҫ тума ӗмӗтленсе, ыранхи, виҫминехи, аякри куна чунне вӗчӗрхентерсе кӗтет вӑл. Кунсем иртнине сиссе те юлаймасть. Шелленипе, тарӑхнипе пуҫне ярса тытать кӑна. Кӳлнӗ лашана кӑкарнӑн, мӗншӗн иртсе каякан вӑхӑта та юпа ҫумне вӗренпе ҫыхса лартмалла маар-ши? Пурне те кӑсӑклантаракан ӗҫ тупӑнинччӗ, вара пӗр вырӑнта хытса тӑнӑ дружина ӗҫӗ тапранса кайӗччӗ, пурте ыйхӑран вӑранӗччӗҫ. Кам тӗллесе кӑтартӗ ҫав ӗҫе? Никам та канаш, ӑс памасть. Пионерсен аслӑ тусӗ вожатӑй ҫук. Дружина ӗҫне хускатассишӗн Илюк тӑрӑшман мар. Тем те шухӑшласа тупнӑ. Анчах кирек хӑҫан та ӗҫ ӑнӑҫман. Ялан Трапхинпе Шӳреке ура хурса пыраҫҫӗ. Шутсӑр усал, йӗркесӗр ачасем, алхасма юратаҫҫӗ, никамран хӑрамаҫҫӗ. Ку ҫеҫ-и, усал хыпар сараҫҫӗ.

Илюк суккӑр Левенти мучине пахчинчи ҫӗрулмине йышпа кӑларса пуҫтарса парасшӑнччӗ. Ачасем килӗшрӗҫ. Пӗр тӗле пухӑннӑччӗ ҫеҫ, Трапхин ҫӑхан евӗр кранклатрӗ:

– Ачасем, эпӗ тӗлӗнмелле япала пӗлетӗп!

– Мӗнле япала? – карах сырса илчӗҫ ӑна пурте. – Кала хӑвӑртрах!

– Курӑс кӳллине акӑшсем кӗтевӗпех канма анса ларнӑ. Кам курма пырасшӑн – атьӑр пирӗнпе! – аллине сулса, малалла чупрӗ Трапхин.

Курӑс кӳлли вӑрманта, шкултан чылай аякра. Мӗн тейӗн, Йӑкӑнатпа Трапхин хыҫҫӑн кӗшӗлтетрӗҫ ачасем. Илюк тытса чараймарӗ. Пӑхать, ун ҫумӗнче пӗртен–пӗр хӗрача – Кӳлнари юлнӑ.

– Акраппи ӑҫта? – тӗлӗнчӗ Илюк. Кӳлнарипе Акраппи ялан пӗрле ҫӳретчӗҫ.

– Акӑш курма кайрӗ, – пулчӗ ун сӑмахӗ.

– Эпӗ сире ӑмсанаттӑм.

– Мӗншӗн?

– Манӑн ҫывӑх тус ҫук, – кулянчӗ Илюк. – Пулнӑ пулсан, эпӗ унран нихҫан та уйрӑлмӑттӑм.

– Вӑл хӑй пӑрахса кайсан?

– Вара вӑл – юлташ мар.

Кӳлнарипе Илюк иккӗшех мучи пахчинче кӗрмешрӗҫ. Трапхинпе Йӑкӑнат Кӳлнарие хӑйсемпе пыманшӑн тарӑхрӗҫ, тавӑрма, шутларӗҫ ӑна.

– Сана вӑрттӑнлӑх пӗлтерес-и? Асту, никама та ан шарла, – хӑлхинчен пӑшӑлтатрӗ Трапхин, пӗр арҫын ачана тытса чарса. – Ҫӗркаҫ Кӳлнари вӑрманта ҫитӗннӗ арҫынпа алла-аллӑн тытӑнса ҫӳрерӗ, тет.

– Ай-ай!

Йӑкӑнат тепӗр ачана тытса чарчӗ те ӑна та хӑлхинчен пӑшӑлтатрӗ:

– Илтрӗн-и эсӗ тӗлӗнтермӗш! Кӳлнари хӗр пуҫҫӑн пирус туртать, эрех ӗҫет.

Чараксӑр чӗлхесенчен вӗҫерӗннӗ, шухӑшласа кӑларнӑ усал хыпар пӗр хӑлхаран тепӗр хӑлхана кӗре-кӗре тухрӗ. Каярахпа яла куҫрӗ, пысӑккисен ҫӑварӗнче шӗкӗлченчӗ. Кӳлнари амӑшӗ вӑрманта катка-пичке тӑвакан заводра ӗҫлет. Вӑл ирӗке янӑ имӗш хӗрне.

Хӑшпӗр ҫынсен лайӑх мар йӑла пур ҫав: усал хыпара хӑвӑрт ӗненеҫҫӗ. Кӳлнарин кӗпи ытла кӗске, ҫӳҫне вӑрӑм ӳстернӗ. Куҫ харшисем ытла тӗксӗм, – сӑрлать. Тути мӑкӑнь евӗр хӗрлӗ, – писев сӗрнӗ. Пирус туртма, эрех ӗҫме вӗреннӗ хӗрачан ӑраскалӗ ҫапла.

Кӳлнари ят пӑсӑлчӗ. Хӗрачасен амӑшӗсем ун ҫине йӗрӗнсе пӑхаҫҫӗ.

– Сан хӗрӳпе юлташлӑ, теҫҫӗ. Мӗншӗн чармастӑн унпа ҫӳреме? Пӑсӑлса кайсан, чавсу ҫывӑх та ҫыртаймӑн, – ӑс парать Акраппи амӑшне пӗри те тепри.

Хытарчӗ вара хайхискер хӗрне, шаккасах каларӗ:

– Сан пирки те усал сӑмах илтсен, киле кӗртместӗп!

Туслăх пĕтрĕ. Акраппи тепĕр хĕрача патне куçса ларчĕ. Кӳлнари пĕчченех юлчĕ малти парта хушшинче. Перемена вăхăтĕнче Акраппи ытла хĕрачасемпе коридор тăрăх çавтăнса утать, савăнăçлăн ахăлтатса кулать. Мĕн култарать ăна? Кӳлнари пĕлмест. Чунне наркăмăш тумлатрĕç унăнне. Вăл – пĕр-пĕччен.

Илюк хĕрхенет хăйĕн хĕр-тантăшне. Ун амăшĕ те ывăлĕ майлă. Çăл хĕррине пуçтараннă хĕрарăмсенчен пĕри Кӳлнарине тиркесе сăмах тапратсан, каçса кайсах ятлать ăна.

– Çав çамрăк хĕрача çинчен путсĕр элек–телек саракана, тупата, куçĕнчен сурма хатĕр эпĕ, – тарăхать вăл. Ывăлне çапла калать: – Пуç тăрринче вĕçекен хура çăхана хăвала. Хаяр сăмах çын пуçне çиет, тенĕ ĕлĕк.

Хĕрача чысне сыхлама ахаль те тăрăшать-ха Илюк. Урамра-мĕнре Кӳлнарие йĕкĕлтекен ачана тĕл пулсан, тӳпелешес вĕçнех çитет вара вăл.

– Ху курнă-и эсĕ Кӳлиари пĕр–пĕр теттепе утса кайнине?

– Курман, – тет лешĕ. – Йăкăнатпа Трапхин калаççĕ.

– Вĕсен çăварĕнчен ырри тухманнине пĕлетĕн–çке. Ан ĕнен. Элек сарма пăрах.

Çавăн пек ачапа Хветĕр те чĕрре кĕрет.

Ĕççĕр супса çӳренипе çапла ашкăнаççĕ ачасем. Кăсăк вăйă кирлĕ вĕсене.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.